Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

*45 (7576) №* ✻ *Юн кун, 2008 çулхи июнĕн (çĕртме) 18-мĕшĕ* ✻ *Хакĕ ирĕклĕ*

**Республика кунне хатĕрленнĕ май**

## Кĕçех врач офисĕн алăкĕ уçăлĕ



Эрне каялла Чăваш Республикин Президенчĕ Республика кунне хатĕрленессипе ĕçсем епле пынине тишкернĕ чух Муркашри ĕçсене кăткă тĕммипе танлаштарчĕ, Республика кунне уявлама хатĕрленсе Муркашсем пысăк калăпăшлă ĕçсем туса ирттернине палăртрĕ. Кашниех тивĕçеймест çакнашкал пысăк хаклава. Унăн никĕсĕнче вара Муркашсен ĕç юратăвĕ, килен-каян хăнана хисеп тума пĕлни, кулленхи пурнăçра тирпей-илеме мала хуни.

Республика кунĕ пирĕн районта иртнипе унăн программи те пуян. «Муркаш районĕнчи тĕп больница» муниципаллă сывлăха сыхлас ĕç учрежденийĕн Шетмĕпуçĕнчи пĕтĕмĕшле практика (çемье) врачĕн уйрăмне уçасси те уяв программин пысăк пайĕ. Çавна май хатĕрленӳ ĕçĕсем епле пынипе паллашма иртнĕ тунти кун Шетмĕпуçĕнчи пĕтĕмĕшле практика (çемье) врачĕн уйрăмне çитсе куртăм.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

**Республика кунне çапла хатĕрленетпĕр**

## Хăнасем куç хупса иртессе шанмалли çук

Республика кунĕччен шутлă кунсем çеç юлчĕç. Уяв мероприятийĕсем ырантан пуçланаççĕ: район центрĕнче «Сывлăх» физкультурăпра спорт комплексĕ тата Ярапайкасси ял тăрăхĕнче «Волга – Вăрăмой – Иштерек – Вускасси» автомобиль çулне уçаççĕ.

Районта иртекен Республика кунĕн программи питĕ анлă, Муркашсăр пуçне уяв мероприятийĕсем Шетмĕпуçпе Çатракасси ял тăрăхĕсенче те иртеççĕ. Тĕрĕссипе, пур çĕрте те хатĕрленӳ ĕçĕсем вĕçленсе пымалла пек, анчах хăш-пĕр çĕрте территорие, çуртсемпе хуралтăсене хăт кĕртессине те вĕçлемен. Чăвашра çакăн пек ырă йăла пур: хăнасене кĕтсе илес умĕн пӳрт-çурта тирпей-илем кĕртме тăрăшатпăр. Мĕн авалтан пыракан ырă йăла çакă. Тепĕр тесен, тирпейлĕх хăнасене мар, хамăрах кирлĕ. Шел, пур çĕрте те ăша хывасшăн мар çакна.

–Чи пысăк проблемăллă вырăн – Çатракасси ял тăрăхĕнче, – терĕ иртнĕ тунти кун район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсемпе ирттерекен канашлура район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов. – Пурте хисеплекен хуçалăх ертӳçи К.Е. Сретинский Республика кунне хатĕрленсе ирттерекен ĕçсенчен айккине пăрăнса тăчĕ. Президент аллинчен 1 миллион тенкĕ укçа илнĕ хуçалăх ертӳçи Президента çакăн пек кĕтсе илессине кĕтменччĕ.

Вулакансене пĕлме. Республика кунне халалласа ирттерекен мероприятисенчен пĕри – Кашмашра республикăри чи пĕрремĕш моделлĕ Культура çуртне уçни. Хăнасем кирек хăш енчен кĕрсен те – хăть Шетмĕпуç енчен, хăть Муркаш енчен – «Свобода» хуçалăх правленийĕн çурчĕ çумĕпе иртсе каймалла. Иртнĕ тунти кунччен вара правлени çурчĕн картисене те сăрламан, çул тепĕр енче йăваланса выртакан пĕренесене те пуçтарман. Хуçи çук-ши?

Çитменлĕхсем ку ял тăрăхĕнче татах та пур. «Моргаушкорм» чикĕллĕ яваплăхлă обществăна хирĕç ларакан хуçалнă картана юсама та халиччен никам ăн та алă çитмен те, Кашмаш ялне пырса кĕнĕ çĕрте уй хапхине тума та шутламан пулмалла. Юнашарти Шетмĕпуç ял тăрăхĕнче, ав, Шетмĕпуçне кĕнĕ çĕрти уй хапхи çĕнĕ тум тăхăнса хĕвел айĕнче çиççе çеç ларать, сылтăмри çурт çумĕнчи ашкăрса ларакан хупахсемпе ытти çум курăк пĕтĕмĕшле ӳкерчĕке пăсние шутламасăр. Шетмĕпуçĕнчи пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕн çурчĕ хатĕр хăнасене кĕтсе илме.

Çатракасси ял тăрăхĕнче вара Ятманта та, Кашмашра та, Çатракассинче те шыв башнисене сăрламан. Çатракассинчи пахча çимĕç хранилищи патĕнчи бетон блоксене пуçтарман. Кашмашри Культура çуртĕнче вара хатĕрленӳ ĕçĕсем чарăнмаççĕ. Культура ĕçченĕсем ял тăрăхĕн администрацийĕн ĕçченĕсемпе пĕрле çурта шал енчен хăт кĕртеççĕ, картасене сăрлаççĕ. Культура çуртĕнчи юсав ĕçĕсене çавăн пекех уйрăм предпринимательсен строительство фирмисен ĕçченĕсем тăваççĕ. Юнашарти ача-пăча паркĕнче тирпейлĕ, вăл кунран-кунах çĕнĕ оборудованисемпе пуянланса пырать.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**



Тĕслĕх Культура çурчĕ умĕнче ача-пăча паркĕ пулать.



Уява хатĕрленсе ĕçлемелли пайтах.

# Муркаш Ен уява йыхравлать

### *Республика кунне Муркаш районĕнче уявлассипе çыхăннă тĕп мероприятисен программи*

### ИЮНĔН 19-МĔШĔ

Физкультурăпа спорт комплексне уçни – Муркашра 8 сехет те 30 минутра.

«Волга» – Вăрăмой – Иштерек – Вускасси» автомобиль çулне уçни – 9 сехет те 10 минутра.

### ИЮНĔН 20-МĔШĔ



Пĕтĕм Раççейри «Песни России» фестиваль-марафон шайĕнче Надежда Бабкина ертсе пыракан «Русская песня» театр коллективĕ хăйĕн пултарулăхĕпе паллаштарни – Муркашри тĕп сцена çинче 19 сехетре.

### ИЮНĔН 23–24-МĔШĔСЕМ

Районта мала тухса Раççей Геройĕн Евгений Борисовăн парнисене çĕнсе илессишĕн мини-футбол енĕпе уçă ăмăртусем – Муркаш стадионĕнче 11 сехетре.

### ИЮНĔН 23-МĔШĔ

Шетмĕпуçĕнчи врач амбулаторийĕн бази çинче пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмне уçни – Шетмĕпуçĕнче 10 сехетре.

База культура учрежденине – Çатракасси ял тăрăхĕнчи Кашмашри Культура çуртне уçни – Кашмашра 12 сехетре.

«Уява йыхравлани» – юрăпа ташă халăх ансамблĕсен концерчĕ – Кашмашра 12 сехет те 30 минутра.

«Сеспель» хупă акционер обществин çĕнĕ производство комплексне хута яни – Москакассинче 13 сехетре.

«Мăн Сĕнтĕр – Ильинка – Апчар» автомобиль çулне тата «Волга – Мăн Сĕнтĕр – Шашкар пристанĕ» республика автомобиль çулĕн реконструкци тунă пайне хута яни – 14 сехетре.

### ИЮНĔН 24-МĔШĔ

Декораципе прикладной искусство ăстисен «Традиции живая нить» халăх пултарулăх фестивалĕ – район администрацийĕн çурчĕ умĕнчи лапамра 9 сехетре.



«Муркаш районĕ: иртнĕ вăхăт тата хальхи» сăн ӳкерчĕксен вернисажĕ – район администрацийĕн çурчĕ умĕнчи лапамра 9 сехетре.

Суту-илӳпе апатлану предприятийĕсен продукцийĕсене сутмалли выставка – Муркашра Мир урамĕнче 9 сехетре.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**